Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

88 (8154) № * Шăмат кун, 2013 çулхи чӳк (ноябрь) уйăхĕн 23-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

## Чи çывăх çын, чи лайăх юлташ

***Паянхи сăн ӳкерчĕкре эсир Чуманкасси ял тăрăхĕнчи Отарккăра пурăнакан Николаевсен çемйине куратăр. Çак хисеплĕ çемье пĕлтĕрхи «Çулталăк çемйи» район конкурсĕнче «Чи туслă çемье» номинацире çĕнтерме пултарчĕ.***

***Алексей Ивановичпа Светлана Леонидовна 1999 çулта çемье çавăрнă, паян вĕсем виçĕ ача пăхса ӳстереççĕ. Асли, Марина, 8 класра вĕренет, Андрей – 6 класра. Глеб вара «Малыш» ача сачĕн вăтам ушкăнне хаваспах çӳрет.***

***«Амăшĕ пуласси – питĕ пысăк ответлăх, çавăнпа та çак тивĕç пирки самантлăха та манма юрамасть. Ачана пурнăç патăн пулсан эсĕ уншăн яваплă пулса тăратăн. Çакна питĕ ăывăр ĕç пек хакламалла, анчах та амăшĕ пуласси – нимĕнпе виçейми телей», – çапла шухăшлать хĕрарăмăн тĕп тивĕçĕ пирки Светлана Леонидовна. Мăшăрĕ те унпа килĕшсе аннерен хаклă çын çукkине калать.***

***«Анне пирĕншĕн чи çывăх çын, чи лайăх юлташ. Вăл яланах пулăшать, ăнланать, юратать», – çапла калаççĕ амăшĕ пирки тĕпренчĕкĕсем.***

**Н. ДИМИТРИЕВА**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**

Ыран – Амăшĕн кунĕ



**ХАКЛĂ ЕНТЕШĔМĔРСЕМ!**

Сире чи çутă та ăшă уявпа – Анне кунĕ ячĕпе пĕтĕм чунтан саламлатăп!

«Амăшĕ ачине çуратнă чух çунат парать», – тенĕ пирĕн мăн асаттесем. Анне пире çынлăхăн чи лайăх енĕсене ăша хывма, ырă ĕçсем тума вĕрентет, пурнăçра тĕрĕс çул суйласа илме пулăшать. Анне тивлечĕпе хавхаланса, хамăршăн чи хаклă çыннăмăра асра тытса эпир пурнăçра темле кăткăс лару-тăрăва та çĕнме вăй-хал çитеретпĕр. Аннемĕр пире сыхласа упрать, хăйĕн шанăçĕпе çунатлантарса çĕнĕ çитĕнӳсем тума хавхалантарать.

Пирĕн республикăра ача амăшне тата ачалăха сыхлас енĕпе питех те паха опыт пухнă. Чăваш Енре пепкесем вилеслĕхĕн кăтартăвĕ çĕр-шывра чи пĕчĕккисенчен пĕри. Атăлçи федераци округĕнче – чи пĕчĕкки пулнипе эпир тивĕçлипе мухтанма пултаратпăр. Федераци, республика амăшĕн капиталĕ евĕр паракан социаллă пулăшу мерисем, виççĕмĕш ачашăн уйăракан пособи, нумай ачаллă çемьесене çĕр лаптăкĕсем пани хăйсен пайтине кӳреççĕ. Ача çуралаcси ӳсрĕ, çак ырă пулăм чăн малтанах çемьере иккĕмĕш, виççĕмĕш тата тăваттăмĕш ачасем çуралнипе çыхăннă.

Ача çуртĕнчен илнĕ ачасене пăхса çитĕнтерекен амăшĕсене эпĕ уйăрăммăн палăртса тав тăватăп. Чăваш Енре ача усрава илесси çинчен саккун йышăннă, унпа килĕшӳллĕн ача усрава илнĕ çемьене 300 пин тенкĕ виçепе, сусăр ачана усрава илнĕ çемьене вара – 375 пин тенкĕ виçепе пĕр хутчен паракан пособи тӳлеççĕ.

Мĕн пур амăшĕ умĕнче пуçа таятăп. Сирĕн чи çутă ĕмĕтĕрсем пурнăçланччăр, ĕçĕрсем яланах ăнса пычăр! Пурсăра та телейпе юрату тата тăнăçлăх сунатăп!

**М. ИГНАТЬЕВ, Чăваш Республикин Пуçлăхĕ.**

**ХИСЕПЛĔ АННЕМĔРСЕМ!**

Сире Ача амăшĕн кунĕ ячĕпе ăшшăн саламлатăп.

Пирĕнтен кашниншĕн чи çывăх çын вăл – анне. Эсир ачăрсене кун-çул парнеленипе пĕрлех вĕсене пурнăç çулĕ çине кăларассишĕн тимлетĕр. Мĕн ĕмĕр тăршшĕпех ывăлхĕрĕрсем телейлĕ пулччăр тесе хăвăртан килнине йăлт тăватăр. Канăç мĕнне те пĕлместĕр пулĕ, ытарайми аннемĕрсем. Чăннипех те, аннерен хакли никам та çук. Эсир пире ăнланатăр, айăпа каçаратăр, пире яланах кĕтетĕр. Тавах сире, аннемĕрсем, пире çуратнăшăн, юратнăшăн, ятланăшăн, çын тунăшăн. Тавах сире эсир пурришĕн, йывăр чухне пулăшнăшăн, ырă сăнӳпе вăй панăшăн, ăш сăмахпа хавхалантарнăшăн.

Эсир ачăрсене тĕрĕс воспитани парса ӳстернипе пĕрлех куллен ĕçре тăрăшса вăй хуратăр: район, республика, çĕр-шыв экономикине çирĕплететĕр. Эсирех обществăлла ĕçре те хастар. Ĕçĕрсем малашне те ăнса пычăр.

Сывлăхăр сирĕн çирĕп пултăр, утас çулăр такăр пултăр, пурнăçа кун-çулăр телейлĕ те вăрăм килтĕр. Ачăрсем савăнăç çеç кӳччĕр.

**Р. ТИМОФЕЕВ,**
**район администрацийĕн пуçлăхĕ.**

## И. Исаев Муркашра пулчĕ

*Районта: ĕнер, паян, ыран*

Тавралăха хӳтĕлемелли çулталăкра мĕнле ĕçсем ирттернипе интересленсе ЧР çут çанталăкпа экологи министрĕ Иван Исаев пирĕн районта пулчĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕпе Р. Тимофеевпа тĕл пулса министр район территорийĕнчи полигонти ĕçсемпе кăсăкланнă. Тавралăха тирпей-илем кӳртесси, çут çанталăк сыхлавĕпе çыхăннă саккунсене пăхăнасси, Атăл çыранĕнчи сервис – ертӳçĕсем çак ыйтусене те сӳтсе явнă. Ĕçлĕ тĕл пулу вăхăтĕнче И. Исаевпа Р. Тимофеев Шашкар заливĕнчи лару-тăрупа та паллашнă.

## Паттăр ячĕ вилĕмсĕр

2013 çулхи ноябрĕн 20-мĕшĕнче пирĕн ентеш, Совет Союзĕн Геройĕ, Çĕмĕртлĕх Чемей ялĕнче çуралса ӳснĕ Борис Васильев çуралнăранпа 100 çул çитрĕ.

Çав паллă куна халалласа Нискасси шкулĕнче тата Çĕмĕртлĕх Чемей ялĕнче савăнăçлă мероприяти ирттернĕ. Унта Ярославка ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Г. Кожевников, Нискасси шкулĕн директорĕ Н. Димитриева, депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ В. Басяев, район администрацийĕн физкультурăпа спорт тата туризм секторĕн ертӳçи В. Петров тухса калаçнă, ентешĕн паттăрлăхĕ вилĕмсĕр пулнине, вăл çамрăксемшĕн яланах тĕслĕх пулса тăнине палăртнă. Нискасси шкулĕн учителĕ Т. Андреева Борис Васильевăн тулли биографийĕпе паллаштарнă.

Савăнăçлă мероприяти хыççăн Борис Васильевăн стелли умне чечексем хунă.

## Туслă тĕл пулу

Пирĕн районта инвалидсен обществин Етĕрнери организацийĕн представителĕсем пулнă. Вĕсене Каршлăхра обществăн районти организацийĕн председателĕ А. Николаева, районти социаллă хӳтлĕх пайĕн пуçлăхĕ В. Аникина, социаллă пулăшу центрĕн заведующийĕ С. Илларионова, Каршлăхри интернат çурт директорĕ Г. Мерлова кĕтсе илнĕ. Кӳршĕсем çав кун интернат çурт ĕçĕ-хĕлĕпе паллашнă, светуй çăл куçра шыва кĕнĕ, районти историпе краеведени музейне çитсе курнă.

## «Сигарета канфетпа улăштар»

Çак ятпа Муркаш шкулĕн активисчĕсем акци ирттернĕ. Шкулта асăннă мероприятие Пирус туртма пăрахмалли пĕтĕм тĕнчери куна халалласа ĕнтĕ виççĕмĕш çул йĕркелеççĕ. Акцие хутшăнакансем Муркашра листовкăсем валеçнĕ, çынсене пирус туртнин сиенĕ пирки ăнлантарнă. Акци тĕллевĕ – пирус туртнипе кĕрешессин проблеми çине обществăн енчен ытларах тимлĕх уйăрасси.

## Право сехечĕ иртнĕ

РФ Правительствин комиссийĕн ларăвĕн йышăнăвне тĕпе хурса ноябрĕн 20-мĕшĕнче Раççей Федерацийĕн субъекчĕсенче Ачасене право пĕлĕвĕ памалли кун иртрĕ. Çавна май Муркашри ял тăрăхĕсем хушшинчи тĕп библиотекăра «Ачасене юридици пулăшăвĕ тӳлевсĕр парасси» ятпа право сехечĕ йĕркеленĕ. Унта Муркаш шкулĕнче 9 В класра вĕренекенсем хутшăннă. Ачасемпе тĕл пулма патшалăх тата муниципаллă услугиcемпе тивĕçтерекен центр ертӳçи Татьяна Королькова, ачасен прависен Муркаш районĕнчи уполномоченнăйĕ Федор Ягушов атте килнĕ.

## Пысăк çитĕнӳ

К. Ярухин ертсе пыракан Йӳçкассинчи «Сипет» драма коллективĕн спектаклĕсене районти куракансем питĕ кăмăллаççĕ. Ноябрĕн 16-мĕшĕнче çак коллектив Элĕк районĕнчен пысăк çитĕнӳпе таврăнчĕ.

Чăваш музыка театрне йĕркеленĕ Б. Маркова халалланă «Театра панă пурнăç» проекта хутшăнса Йӳçкассисем «Кантăкран шаккарĕ хамăр ял каччи» спектаклĕпе 1-мĕш вырăна тухма пултарнă. Спектакле Н. Сидоровăн пьеси тăрăх лартнă.

Пурĕ вара фестивале ултă районти халăх театрĕ тата драма коллективĕ хутшăннă.

**В. ШАПОШНИКОВ, Н. НИКОЛАЕВА**
**хатĕрленĕ.**

Кĕскен

## Халăхпа сӳтсе явнă

Муркаш район пуçлăхĕн – депутатсен районти Пухăвĕн председателĕн йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн ноябрĕн 22-мĕшĕнче район администрацийĕнче депутатсен районти Пухăвĕн «Чăваш Республикинчи Муркаш районĕн Уставне улшăнусем кĕртесси çинчен» йышăнăвĕн проектне тата «Чăваш Республикинчи Муркаш районĕн 2014 çулхи тата планланă 2015 – 2016 çулсенчи бюджечĕ çинчен» йышăнăвĕн проектне халăхпа сӳтсе явнă.

Йышăнусен проекчĕсене депутатсен районти Пухăвĕн çитес ларăвĕн çирĕплетнĕ хыççăн вĕсем вăя кĕрĕç.

Палăртнă тăрăх районăн çитес çулхи бюджечĕ тупăшсем енĕпе 433 млн. та 433,6 пин тенкĕпе танлашмалла. Вăл шутра 118 млн. та 361,7 пин тенкĕ район хăй «ĕçлесе илме» тивĕç.

## Аслисен те хастар пулмалла

Сăмах – райадминистраци ĕçченне

Çынсен сывлăх шайне, уйрăмах ача-пăчапа çамрăксен сывлăхне, вырăнта массăллă физкультурăпа спорта аталантарас ĕçе мĕнле йĕркелени те палăртать. Çыннăн пĕтĕмĕшле культури та çакăнпа çыхăннă.

Физкультурăпа спорт тĕлĕшпе патшалăх палăртнă политикăна вырăнта пурнăçа кĕртессипе район администрацийĕн физкультурăпа спорт тата туризм секторĕ ял тăрăхĕсен администрацийĕсемпе пĕрле пурнăçлать.

Массăллă спорта шкул ачисене явăçтарасси пирĕн районта ялăх мар шайра пулсан, аслисем тĕлĕшпе ку лару-тăру ялăхрах. Ĕç коллективĕсен спартакиади çулсеренех иртет, анчах та унпа палăртнă ăмăртусене шалти ĕçсен пайĕн, «Оринино» хуçалăхĕн командисем тата «Юнга» физкультура клубĕ кăна активлă хутшăнаççĕ. Ытти предприятисемпе организацисем, учрежденисемпе ял тăрăхĕсем пĕр-икĕ ăмăртура кăна вăй виçеççĕ. Ку та вырăнсенче е ĕç коллективĕсенче спортăн хăш-пĕр тĕсĕсемпе пуçарулă çынсем пуррипе кăна. Ĕç коллективĕсенче спорт енĕпе инструктор пулнин пĕлтерĕшĕ пирки пирĕн районта темиçе çулах калаçатпăр, анчах та нихăш предприяти-организацинче те, вырăнсенче те кун пек штат çук.

Район центрĕнчи физкультурăпа спорт комплексĕнче сывлăха çирĕплетмелли май чылай, анчах, шел пулин те, аслисем нумайăшĕ кунта çӳремеççĕ. Кунти чаплă условисем пирки ачасем вĕренӳ программипе пăхса хунă уроксем урлă пĕлеççĕ, ачасемпе çамрăксен районти спорт шкулĕн секцийĕсене çӳрекенсем ФСК-па туллин усă кураççĕ. ФСК администрацийĕ аслисем майлă утăм туса сывлăх кунĕсем, усă алăксен кунĕсем ирттерет. Вăл вăхăтра пур услугăпа та тӳлевсĕр тивĕçтерет. «Сывлăх» ФСК-на çамрăксем, ĕçлекен çынсем харпăр хăй тĕллĕн çӳреççĕ. Предприяти-организаци ертӳçисен ĕçлекенсене ФСК-на коллективпа е ушкăнпа çӳреме май тупса пама пулатех пулĕ. Çакăн пек туни çынсене çирĕплетме те, коллективри хутшăнусене лайăхлатма та пулăшать. Ертӳçĕсемшĕн коллектив сывлăхлă пулни, апла пулсан ĕç анса пыни пĕлтерĕшлĕ пулмалла.

Хăш-пĕр ял тăрăхĕсенче массăллă физкультурăпа спорта аталантарассипе çулталăкне пĕр мероприяти ирттереççĕ, иккĕ... Çакăн пек лару-тăру вара, пĕтĕмĕшле илсен, ĕçе çиелтен пурнăçланипе пĕрех пулса тухать.

**В. ПЕТРОВ,**
**район администрацийĕн физкультурăпа спорт тата туризм секторĕн ертӳçи.**

Çырăнтару – 2014

## Çырăнмасăр ан юлăр!

**«Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2014 çулхи январьтен илсе тăма малалла сырăнтараççĕ.**

**Хаçата 6 уйăха çырăнмалли хак – 216 тенкĕ те 30 пус.**

**Хаклă вулаканăм! Малашне те пĕрле пулар!**

**Хаçат редакцийĕ.**

# Кунта хамăр пурăнатпăр. Хамăрăнах хамăр пурнăç çинчен шутламалла

***Иртнĕ юн кун пирĕн республикăра пĕрлехи информаци кунĕ иртрĕ. Хальхинче унта Чăваш Республикин 2014 тата планлă 2015–2016 çулсенчи бюджетсене, çак тапхăрсенчи республикăри бюджет политикине, РФ Конституцине йышăннăранпа 20 çул çитнине пăхса тухрĕç. Кун йĕркинче çавăн пекех 2013–2014 çулсенче шыв çинче хăрушсăрлăх, республикăри кăçалхи пĕчĕк тата вăтам предпринимательствăн субъекчĕсене аталантарассин малтанхи пĕтĕмлетĕвĕсем тата çак сферăна çитес çулта аталантарас ыйтусем, чĕлĕм туртма чикĕлесси çинчен калакан саккунри улшăнусем те пулчĕç. Çак кун тата шкулсенче, ачасемпе ĕçлекен учреждменисенче, шкул-интернатсенче, медицина учрежденийĕсенче ачасене юридици пулăшăвне тӳлевсĕр памалли кун пулчĕ. Çавăнпа та пĕрлехи информаци кунне хутшăнакансем çак ыйтăва та айккинче тăратса хăвармарĕç.***

***Пирĕн района килнĕ информаци ушкăнĕ чи малтанах район администрацийĕн пуçлăхĕпе Р. Тимофеевпа тĕл пулчĕ. Ростислав Николаевич вĕсене районăн кăçалхи 10 уйăхри социаллă пурнăçĕпе тата экономика аталанăвĕпе паллаштарчĕ. Унтан вĕсем ушкăнсем çине пайланса район администрацийĕн ĕçченĕсемпе пĕрле ял тăрăхĕсенче пулса ĕç коллективĕсене çитсе килчĕç, граждансене хăйсен ыйтăвĕсемпе те йышăнчĕç.***

***Палăртмалла, хальхинче пĕрлехи информаци кунĕ пирĕн районти кашни ял тăрăхĕнчех иртрĕ. Унта çавăн пекех депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕсем те хутшăнчĕç.***

**МУРКАШРИ СĔТ-ÇУ ЗАВОЧĔ ХУПĂНМАСТЬ, МАЛАЛЛАХ ĔÇЛЕТ**

Пĕрремĕш ушкăн çак кун Хорнуй ял тăрăхĕнче пулчĕ. Унччен вара район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ О. Дельман, депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ В. Данилов «Моргаушский» сĕт-çу завочĕ» чикĕллĕ яваплăхлă обществăра пулчĕ.

Сăлтавĕ кунта çакăнта. Юлашки кунсенче халăх хушшинче çакăн пек хыпар сарăлчĕ. «Сĕт-çу заводне» хупаççĕ, çынсене ĕçрен кăлараççĕ» имĕш.

Тӳрех çакна каламалла. Ку тĕрĕс мар. Кун пек пулма та пултараймасть. Мĕншĕн тесен кризис вăхăтĕнче те асăннă предприяти йывăрлăх айне путмарĕ. Панкрута тухма пуçланă предприятие çак лакăмран туртса кăларчĕç, завод яланхи пекех сĕт-çу продукцине туса кăларчĕ.

Паян вара кунта ĕçĕ акă мĕнре. Юлашки вăхăтра сĕт хакĕ палăрмаллах хăпарчĕ. Çакă – сĕт туса илекен ял хуçалăх предприятийĕсемшĕн пысăк пулăшу. Анчах та пирĕн районти сĕт-çу завочĕ пек заводсене пырса тивмерĕ çав çăмăллăх. Çапла майпа вĕсемшĕн пачах урăхла лару-тăру килсе тухрĕ: сĕт-çу завочĕ суту-илӳ сетьне, бюджет учрежденийĕсене ăсатакан йӳçнĕ сĕтрен хатĕрленĕ продуктсен хакĕ вĕсен хăйхаклăхĕнчен те йӳнелсе кайрĕ, сахалтан та 2–3 тенкĕ йӳнĕ. «Путь Ильича» АФ» чикĕллĕ яваплăхлă обществăн генеральнăй директорĕ О. Дельман каланă тăрăх шăпах çакна пула заводра йӳçнĕ сĕтрен хатĕрленĕ продукцие кăларма пăрахрĕç. Хальхи вăхăтра унта çу тата тăпăрчă туса кăлараççĕ. Çак сăлтава тата технологи режимĕнчи улшăнусене пула кунта ĕçлекенсен йышне чакарма йышăннă. Хальхи вăхăтра унта тăпăрчăпа çу тунă çĕрте ĕçлекенсене хăварнă.

– Енчен те 2 уйăхра лару-тăру лайăх енне улшăнать пулсан киле янă рабочисем каялла хăйсен ĕç вырăнне таврăнĕç, – терĕ Олег Александрович.

Предприятин генеральнăй директорĕ тата çакна палăртрĕ. Халĕ умра 2 задача, завода тата ĕç коллективне сыхласа хăварасси. Çак тĕллевпе предприятие ертсе пыракансем мĕн пур тивĕçлĕ мерăсене йышăнаççĕ. Çав шутран, завод директорĕ А. Воробьев каланă тăрăх, сĕт туса илекен предприятисенчен сĕте пысăк хакпа туянма тĕллев лартнă. 1 литрне 20 тенкĕпе. Генеральнăй директор О. Дельман çакна та палăртрĕ:

– Сĕте 21 тенкĕпе те, тата хаклăрах хакпа та йышăнма хатĕр завод.

Çакă заводри лару-тăрăва ырă енне улăштарма пултарать. Мĕншĕн тесен халь мĕнле пулса пырать-ха. Сĕт туса илекене республика паракан субсидие илекен хуçалăхсемех туса илнĕ сĕте ытти республикăсене ярăнтараççĕ. Муркашри сĕт-çу завочĕ йышăнакан çак мерăсем шăпах çавăн йышши хуçалăхсене пирĕн районти сĕт-çу завочĕпе ĕçлеме хавхалантараççĕ. Çакă заводри лару-тăрăва лайăхлатма пулăшать.

Пĕтĕмĕшле лару-тăрăва вара Олег Александрович çапла хак пачĕ:

– Лару-тăру татса памаллискерех.

**КУНТА ÇĔНĔ ФАП ПУЛАТЬ. СĔТ-ÇУ КОМПЛЕКСĔ ТЕ МАЛАЛЛАХ АТАЛАНĔ**

Унтан информаци ушкăнĕ Хорнуй ял администрацийĕнче ку тăрăхра пурăнакансемпе тĕл пулчĕ (унта депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ А. Сидюшкин та хутшăнчĕ). Пĕрлехи информаци кун йĕркинчи ыйтусем çинче чарăннă май район администрацийĕн пуçлăхĕ çакна палăртрĕ.

Чăваш Республикин çитес çулхи бюджечĕн тупăш пайĕ 32,4 млрд. тенкĕ пулмалла е кăçалхин 91,5% чухлĕ (кĕртекен улшăнусене шутласа). 2015 тата 2016 çулсенче вăл 32,2 тата 31,0 млрд тенкĕпе танлашĕ. Çак çулсенче харпăр хăйсем туса илекен тупăш республика бюджетĕнче ӳсмелле тесе палăртаççĕ.

Çав вăхăтрах çак тапхăрта социаллă сферăна аталантарнă çĕре ямалли тăкаксем палăрмаллах ӳсмелле. 2016 çулта вăл пĕтĕм тăкакăн 73,3 поценчĕ чухлĕ пулмалла. Тĕслĕхрен, кăçал вăл 66,2 процент. Ростислав Николаевич кашни отрасле каякан суммăсем çинче тĕплĕн чарăнчĕ.

Ростислав Николаевич шухăшĕпе республика бюджечĕ те, район бюджечĕ те «асăрханулла тата пурнăçа кĕртмеллескерсемех».

Район администрацийĕн пуçлăхĕ çавăн пекех бюджет учрежденийĕсенче ĕçлекенсен ĕç укçине хăпартасси çине çитсе çакна палăртрĕ:

– Ку ыйту сӳтсе явмалли мар, ниме пăхмасăр пурнăçламалли.

Республикăра паян ашшĕ-амăшĕ сывă çĕртех тăлăха юлакан ачасен йышне чакарасси çине тимлĕх уйăрнине палăртрĕ. Ку вăл профилактика ĕçне вăйлатмаллине, ăнăçсăр çемьесен йышĕ чактăр тесе лайăххах ĕçлемеллине пĕлтерет. Кăçал пирĕн районта кăна 6 тăлăх ачаран 5-шне опекунсен çемйисене вырнаçтарнă. Пĕрне вара ача çуртне яма тивнĕ.

Районти социаллă пурнăçпа экономика аталанăвне пĕтĕмĕшле илес пулсан çакна палăртмалла, лару-тăру тăнăçлă. Паллах, канăç паман ыйтусем те çук мар. Тĕслĕхрен, килти хушма хуçалăхсенче ĕнесен йышĕ чакни тата ытти те шухăшлаттарать.

Тĕл пулура ялта пурăнакансем хăйсене хумхантаракан ыйтусене те хускатрĕç. Тĕслĕхрен, Тойкилтĕри ФАПа хăçан юсасси кăсăклантарать вĕсене. Районти тĕп больницăн тĕп врачĕ В. Данилов çитес çулта унта Шомикри пекех çĕнĕ фельдшерпа акушер пункчĕ пуласси çинчен пĕлтерчĕ.

Пĕлтĕр тĕплĕ юсанă «Муркаш–Хорнуй–Платкасси» çул хăвăртах çĕмĕрĕлме пуçлани те канăç памасть ку ял тăрăхĕсенче пурăнакансене. Ку ыйтупа та тивĕçлĕ мерăсем йышăнма пулчĕç информаци ушкăнне кĕрекенсем.

«Путь Ильича» хуçалăх аталанăвĕ пирки вара О. Дельман çакна палăртрĕ, малтан шутланă пекех çĕнĕ сĕт-çу комплексĕн иккĕмĕш черечĕ те пулĕ. Тĕл пулура çакна валли выльăх апачĕ туса илме çĕр лаптăкĕсене пысăклатас ыйтăва та сӳтсе яврĕç.

**АЧАСЕМ ТЕ ÇИТЕÇÇĔ, АЧА САЧĔ ТЕ, ШКУЛĔ ТЕ ПУР – АНЧАХ...**

Çак ял тăрăхĕнче тепĕр канăç паман ыйту пур. Ку вăл Тойкилтĕри ача сачĕн шăпи. Район администрацийĕ ăна кунĕпех ĕçлемелли вăхăт çине куçарма май пулнине те палăртнă. Апла пулин те ашшĕ-амăшĕсем çав-çавах пĕчĕк ачисене Муркашри «Путене» ача садне илсе çӳреççĕ. Вырăнти ача сачĕ çурма пушă çĕртех çапла майпа Муркашра пурăнакансен Муркашри ача садне çӳреме черетре кĕтес пулать. Тойкилтĕри ача садĕнче паян 10 ача. Кунта ыйту сиксе тухать. Ачасен йышĕ сахал пулсан мĕн тумалла малалла. Ростислав Николаевич ял тăрăхĕн ĕçченĕсене тепĕр хут ашшĕ-амăшĕсемпе калаçма хушрĕ. Енчен те лару-тăру улшăнмасан ача садĕнчи ачасене шкул çуртне куçарма тивет. Çавăнпа пĕрлех ача сачĕн çурчĕпе малалла мĕнле усă курас ыйтăва та татса памалла пулĕ. Мĕншĕн тесен сахал ачашăн çакăн йышши пысăк çурта тытса тăма йывăр, унăн çи виттине юсамаллине шута илсен, пушшех те.

Çавăнпа та Хорнуй ял тăрăхĕнче пурăнакан ашшĕ-амăшĕсене тарăннăн шутласа пăхма сĕнес килет.

Условисем вара кунта «Путенерен» пĕрре те кая мар. Ачасене илес пулсан та, хăюлăхĕпе райцентрти ачасене маххă памаççĕ: информаци ушкăнне кĕрекенсене пĕр ачи пырса алă парсах сывлăх сунчĕ.

Хорнуй ял тăрăхĕнче ачасен йышĕ пур çинчех ачасем çитменни Тойкилтĕ шкулĕнче те – чуна ыраттаракан ыйту. Кунта паянхи кун 57 ача вĕренет. Юнашар ялсенче пурăнакан ачасенчен чылайăшĕ Муркаш шкулне çӳрет. Çапла майпа Муркашра классем çитмен ыйту та тухса тăма пултарать. Ростислав Николаевич ку ыйтупа та ашшĕ-амăшĕсемпе ĕçлеме сĕнчĕ.

Пĕрлехи информаци кунне кĕрекен ыйтусемпе калаçнă хыççăн вĕрентекенсем хăйсене хумхантараканнисене хускатрĕç. Тĕслĕхрен, ялти плотинан шăпи мĕнле пулĕ малалла, Тойкилтĕ шкулне юсама майсем пулаççĕ-и тата ытти те. Ростислав Николаевич пурин çине те тулли хуравсем пачĕ. Çавăн пекех шкул коллективне пĕчĕк котельнăй туса хутса ăшăтмалли перекет системи çине куçмалли çинчен шухăшласа пăхма сĕнчĕ.

Сăмах май çакна палăртмалла. Çак эрнерен пуçласа Тойкилтĕ шкулĕн – çĕнĕ директор. Ку коллективрах 25 çул ĕçленĕ Л.А. Ивановăна конкурс хыççăн çак должноçа шанса панă. Ростислав Николаевич ăна çав ятпа саламларĕ, ĕçре ăнăçусем сунчĕ, Людмила Алексеевна вара шкул аталанăвĕшĕн хăйĕнчен, коллективран килнине йăлтах тума шантарчĕ.

**Л. ПАВЛОВА.**

# Производство пулсан бюджет та пурнăçланать

Республика патшалăх ветеринари службин выльăхсен чирĕсемпе кĕрешекен районти станцийĕн ертӳçи Николай Яковлев тата кунти ертсе пыракан ветеринари врачĕ Николай Трифонов, район пуçлăхĕ – депутатсен районти Пухăвĕн председателĕ, Ильич яч. хис. ял хуçалăх предприятийĕн ертӳçи Игорь Николаев Уйкас Янасал ял тăрăхĕнче пулчĕç. Чи малтанах вĕсем вырăнти Ильич яч. хис. хуçалăхăн ĕне ферминче вăй хуракансемпе тĕл пулчĕç, кайран Сосновкăри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулти учительсен, кунти информаципе культура центрĕн коллективĕпе тĕл пулу йĕркелерĕç. Тĕл пулусене Уйкас Янасал ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Светлана Никифорова та хутшăнчĕ.

Çавна ăнланас пулать. Вырăнти ял тăрăхĕ шайĕнчи, район, республика тата федераци бюджечĕсем пирки самай калаçма, цифрăсем те нумай илсе кăтартма пулать. Анчах та ку вăл пĕтĕмпех налуксем пухăнассипе, ытларах тупăш илессипе, производствăна аталантарса пынипе çыхăннă. Ĕç вырăнĕсем, ĕçлекенсем, производство çук пулсан нимĕн те пулмасть.

Çак чăнлăха тĕрĕс ăнланаççĕ Уйкас Янасал ял тăрăхĕнче. Территорире пысăк производство объекчĕсем çук пулин те, Ильич яч. хис. хуçалăх хальхи çăмăл мар условисенче те ура çинче çирĕп тăни, малашлăха пăхса ĕçлесе пыни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Ăна ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Светлана Георгиевна та палăртрĕ. Юлашки виçĕ çул хушшинче вырăнти бюджета тупăшсем енĕпе 100 процентĕпех пурнăçлани пĕрре те пулман. Кăçал вара 10 уйăх итогĕсемпе ăна 90 процент пурнăçланă. 100 процента çитме шанăç пур. Хуçасăр пай çĕрĕсене муниципалитет харпăрлăхне куçарассине те асăннă ял тăрăхĕнче аван йĕркеленĕ.

Вырăнти бюджет пысăк темелле мар. Кăçал вăл 2 млн. та 600 пин тенкĕпе танлашать. Çитес çул валли 2 млн. та 300 пин тенкĕне яхăн пулмалла. Кун пек чухне ытларах вырăнти майсем çине кăна шанмалли юлать. 1 млн. та 500 пин тенкĕне яхăн информаципе культура центрне тытса тăма тăкакланать. Куллен пурнăçламалли ĕçсем вара сахалах мар. Ку тĕлĕшпе вырăнти пĕрлешӳллĕ хуçалăх пулăшăвĕ те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Ялсенчи çулсене хĕл кунĕсенче тасатса тытса тăрассине те хуçалăх хăй çине илнĕ.

Хуçалăх ертӳçи Игорь Васильевич мал курăмлă пулнине çак тĕслĕх те çирĕплетет. Ялта та хальхи вăхăтра ăста та пĕлӳллĕ кадрсемсĕр май çук. Вĕсене кĕркуннехи-хĕллехи вăхăтра та ĕçпе тивĕçтерме тăрăшаççĕ. Акă строительсен бригади ферма çурчĕн çивиттине юсассипе ĕçлет. Шалта та юсав ĕçĕсем пурнăçланă. Сăмах май пĕр транспортер çĕнĕрен улăштарасси кăна 260 пин тенкĕне кайса ларнă. Мĕн тăвăн, хаклă пулин те тумаллине тăвасах пулать. Пуçтарма çулталăк, салатма çур талăк текен чăнлăха аван ăнланаççĕ кунта (сăмах май районти хăш-пĕр хуçалăхсем пирки çак сăмахсене калаймăн).

Николай Семенович та хăйĕн сăмахĕнче вырăнти влаç органĕ те, пĕрлешӳллĕ хуçалăх та, ытти организацисем те пĕрле çыхăнса ĕçлесе пыни пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртрĕ. Выльăх-чĕрлĕх отраслне аталантарассин ыйтăвĕсемпе районти ветеринари службипе çыхăнса ĕçлени те уссине памасть мар.

Николай Яковлев цифрăсем илсе кăтартрĕ. Пĕтĕмĕшле илсен районта выльăхсен йышĕ, продукци туса илесси чакса пыни палăрать. Çынсен харпăр хăй хуçалăхĕсенчи мăйракаллă шултра выльăхсен шучĕ кăна икĕ çул хушшинче 1000 пуç ытла сахалланнă. Хуçалăх ертӳçи Игорь Николаев вара выльăх-чĕрлĕх отраслĕ тупăшлă пулнине цифрăсемпех сăлтавлать. Хальхи вăхăтра сыснасене чĕрĕ виçепе пĕр килограмшăн 80 – 90 тенкĕ шучĕпе туянакансем пулни япăх-им? Сĕте килограмне 20 тенкĕпе ăсатни те кунччен пулман. Çитменнине пахалăхлă продукци ăсатнăшăн патшалăх та хавхалантарать. Акă сутнă сĕт пахалăхне кура çурхи ĕççене туса ирттернĕ хыççăн 1 млн. тенкĕ ытла патшалăх уйăрса пани те пысăк тĕкĕ пулнă.

Ял хуçалăхĕнче пысăк ĕç укçи çине шанма йывăртарах. Апла пулин те кăçал хуçалăхра ăна 30 процент ӳстерме май çитернĕ. Кунсăр пуçне тата ял çыннисене 5 тенкĕ те 50 пус çинчен тырăпа, улăмпа тивĕçтернине те шута илес пулать.

Ял тăрăхĕн территорийĕнче пурăнакансен паян пурнăç пыл та çу тесе каласшăн мар. Ытти çĕрти пекех проблемăсем те, ыйтусем те пур. Кусем вĕсем урамсенчи çулсем те, парк, масар территорийĕсене тирпей-илем кĕртесси те, уй хапхисене, хӳмесене юсасси те, йăла каяшне турттарса тăрасси те. Кулленхи пурнăçра вĕсемсĕр мар. Пĕлтерĕшли кунта – вĕсене татса пама майсене пĕрле шырани.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

## Саламлатпăр



Юратнă аттепе аннене – Оринин ялĕнче пурăнакан **Глафира Валерьяновнăпа Валентин Васильевич ВОРОБЬЕВСЕНЕ** сумлă юбилейпа – ноябрĕн 23-мĕшĕнче çемье çавăрни 50 çул çитнĕ ятпа чун-чĕререн саламлатпăр. Эсир пурри – пирĕн савăнăç, пуянлăх. Тавах сире ырă кăмăлушăн, чун ăшшине пире парнеленĕшĕн. Сывлăхăр сирĕн çирĕп пултăр, вăрăм ĕмĕр, канлĕ ватлăх сунатпăр. Пире, пилĕк ачине, ура çине тăратнăшăн, ылтăн аллусемшĕн тав сăмахĕ калатпăр. Эпир сире юрататпăр, сирĕнпе мухтанатпăр.

**Салампа: хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, ывăлĕпе кинĕ, 9 мăнукĕ.**



Пирĕн юратнă юлташăмăр – Мăн Сĕнтĕрте пурăнакан **Елена Назаровна ГРАЧЕВА** ноябрĕн 25-мĕшĕнче 50 çул тултарать. Эпир ăна юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, юхан шыв пек вăрăм кун-çул, çăл куç пек тапса тăракан вăй-хал, иксĕлми телей, савăнăç сунатпăр. Санпа юнашар яланах юратупа шанчăк, умра – çутă та ырă кунсем пулччăр. Мăшăрупа, ачусемпе, мăнукусемпе, тăвансемпе, ĕçтешсемпе тата юлташусемпе яланах пĕрле килĕштерсе пурăнмалла пултăр.

**Ăшă салампа çывăх юлташĕсем, ĕçтешĕсем.**



Хисеплĕренен те хисеплĕ, ылтăнкĕмĕлтен те хаклăрах, хĕвелтен те ăшăрах, çĕр çинчи чи юратнă çыннăмăра – Калмăккасси ялĕнче пурăнакан **Валентина Николаевна ШИШОКИНĂНА** 50 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, тапса тăракан çăл куç пек иксĕлми вăй-хал, тумхахсăр кун-çул, телей сунатпăр. Санăн ялан хавас кăмăл пултăр, чун ăшши нихăçан та ан иксĕлтĕр. Эс пурришĕн Турра тав тумашкăн сăмах та çитмест. Ырă кăмăлушăн, йывăр вăхăтра сан çунаттусем айĕнче канлĕх те ăнланулăх тупма пулăшнăшăн, пирĕншĕн тăрăшнăшăн çĕре çити таймалла пуç. Эпир сана юрататпăр, санпа мухтанатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕ, тăхлачисем тата çывăх тăванĕсем.**



Çĕньял Хуракасси ялĕнче пурăнакан хаклăран та хаклă мăшăра, аннене, кукамая, асаннене – **Елизавета Мефодьевна ДИМИТРИЕВĂНА** 60 çулхи юбилейпа пĕтĕм чун-чĕререн саламлатпăр. Сывлăху çирĕп пултăр, утас çулу яланах такăр пултăр, ĕмĕрӳ вăрăм килтĕр. Тавах сана яланах юнашар пулнишĕн, пурне те пулăшма хатĕрришĕн.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, икĕ хĕрĕпе кĕрӳшĕсем, ывăлĕпе кинĕ, мăнукĕсем, тăванĕсем.**

Çатракасси ял тăрăхĕнчи тĕп усадьбăра пурăнакан юратнă мăшăра, аннене, асаннепе кукамая, хунямана, тăхлачăна тата çывăх тăванăмăра – **Альбина Димитриевна ХРОМОВĂНА** – çак кунсенче 55 çул тултарнă ятпа чĕререн саламлатпăр. Эсĕ пурри – пирĕншĕн телей пани! Пирĕн пурнăçри çак ăнăçлă вăхăт тата ытларах тăсăласса çирĕп шанса, сана пирĕншĕн тунă ырă ĕçсемшĕн çĕре çити пуç тайса тав тăватпăр. Вăрăм ĕмĕр валли çăл куç шывĕ пек таса, Хур акăш çулĕ çăлтăрсемпе пуян пулнă евĕр йышлă туссемлĕ кун-çул, вĕçĕр-хĕсĕр телей те ăнăçу сунатпăр. Эсĕ çакна тивĕç пулнишĕн санпа пĕрле савăнатпăр.

**Салампа: мăшăрĕ, хĕрĕпе кĕрӳвĕ, мăнукĕсем, йышлă тăванĕ.**

Пирĕн хаклăран та хаклă хисеплĕ тăхлачăна – Çатракасси ялĕнче пурăнакан **Альбина Димитриевна ХРОМОВĂНА** 55 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн ăшшăн саламлатăп. Сывлăху сирĕн юман пекех çирĕп пултăр, утас çулу усăлсах пытăр, ĕмĕрӳ чăваш сурпанĕ пек вăрăм килтĕр. Çемьере яланах тату пурнăç хуçалантăр. Юратупа килĕшӳ пĕр-пĕрне ăнланса, ĕмĕт-шухăшсене пурнăçа кĕртме пулăшса пытăр, вăй-хал патăр.

**Ăшшăн саламласа Кашмашри тăхлачи Зоя Петровна.**

Юратнă аннене, хисеплĕ хунямана, кăмăллă асаннене – Çатракасси ялĕнче пурăнакан **Альбина Димитриевна ХРОМОВĂНА** 55 çул тултарнă ятпа хĕрӳллĕн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, юхан шыв пек вăрăм кун-çул, çăл куç пек тапса тăракан вăй-хал, иксĕлми телей сунатпăр. Ĕмĕтленнĕ ĕмĕтӳсем çитсе пычччăр, çемье вучахĕ тикĕссĕн ялкăштăр, унта яланах килĕшӳ, ăнлану, çураçу хуçаланччăр. Пире савăнтарса пурăнма Турри сана тата нумайнумай çул усратăр.

**Пысăк салампа: ывăлĕпе кинĕ, мăнукĕсем.**

Ĕç çынна илем кӳрет тенине эпир хамăр ĕçтешĕмĕр пурнăçĕнче куратпăр. Ăратлă вылăх ĕрчетекен «Свобода» ял хуçалăх производство кооперативĕ-заводра 1979 çултанпа бухгалтерта ĕçлекен **Альбина Димитриевна ХРОМОВĂНА** 55 çул тултарнă ятпа чĕререн саламлатпăр. Çатракассинчи хресчен çемйинче çуралса ӳснĕ хĕр вăтам шкул пĕтерсен телей тенине катара шыраман. Ачаллах çĕр ĕçĕпе çывăх тăнăскер хăйĕн ĕç ĕмĕрне ял хуçалăхĕпе çыхăнтарнă. Вăтам шкул пĕтерсен ятарлă пĕлӳ илнĕ Альбина Димитриевна тăван хуçалăх бухгалтерийĕнче ĕçleме пуçланă. Пирĕн ĕçтешĕмĕр тĕп ĕçре пĕрлех килти хушма хуçалăха аталантарассипе те, ачисене воспитани парассипе те ыттисемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăрать. 55 çул хушшинче «Раççейăн хисеплĕ донорĕ» ята тивĕçнĕскер хуçалăх ĕçченĕсемпе хăйсен чĕлхипе, ялта пурăнакана ял çынни пек калаçма пĕлнишĕн эпир ăна хисеплетпĕр, ырлăх-сывлăхпа вăрăм кун-çул, телей, ăнăçу сунатпăр.

Иртнĕ вăхăтра йывăрри те, çăмăлли те пĕрре мар пулчĕ пулĕ. Анчах вĕсем сана пуç устармарĕç, ытлашши çĕклентермерĕç. Юбилей ячĕпе саламлана май паян эпир çавăншăн санпа мухтанатпăр.

**Саламлаканĕсем: «Свобода» хуçалăх правленийĕпе ĕçтешĕсем, хуçалăхра вăй хуракансем, юлташĕсем.**

# Нумай ачаллă çемье ку çĕр çинче çурт лартĕ

***Çитес вырсарни кун Ача амăшĕн кунне паллă тăватпăр. Муркашра пурăнакан виçĕ ача амăшĕшĕн Н.Грачевашăн кăçал чăннипех те тем пысăкăш савăнăç пулчĕ. Кăçал Грачевсен çемйинче виççĕмĕш ывăл çуралчĕ. Иртнĕ кĕçнерни кун вара ку нумай ачаллă çемьене çурт лартма тӳлевсĕр çĕр илме май паракан сертификата пачĕç. Çак паллă кунпа Грачевсене район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев, Чăваш Республикин пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен министрĕн çумĕ Наталья Тимофеева, министра пулăшаканĕ Инна Волкова саламларĕç.***



– Сирĕн çемьере яланах юратупа тату пурнăç хуçалантăр. Ĕмĕтленнĕ ĕмĕтĕрсем малалла та çитсех пычччăр, – терĕ Ростислав Николаевич, Грачевсене 10 соттăй çĕрлĕ пулма ирĕк паракан сертификата панă май **(сăн ӳкерчĕкре)**. Грачевсен 3 ывăлне те парнесем парса кăмăлĕсене çĕклерĕ.

Чи малтанах çакна палăртмалла. Юлашки çулсенче çĕрсемпе тĕллевлĕн усă курассипе пирĕн районта питĕ нумай ĕç туса иртерĕç. Хаçат вулакансем астăваççĕ пулĕ-ха, Катькас ял тăрăхĕнче вырнаçнă 118 га çĕрпе тĕллевлĕ усă курас ыйтупа пирĕн районта республика шайĕнчи канашлу иртнĕччĕ. Ăна Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев хăй ертсе пынăччĕ. Ун чухне Михаил Васильевич пирĕн районта çĕрсемпе йĕрке тăвас пуçарăва ырланăччĕ. Катькас ял тăрăхĕнчи 118 га лаптăк çĕре Муркаш районĕпе Шупашкар хулинче пурăнакан нумай ачаллă çемьесем валли çуртсем лартма уйăрма йышăнса хăварнăччĕ.

Çак йышăну пурнăçа кĕчĕ ĕнтĕ. Асăннă 118 га çĕре нумай ачаллă çемьесем валли çурт лартма пама Муркаш район тата Шупашкар хула администрацийĕсен муниципаллă харпăрлăхне куçарнă. Грачевсене панă 10 соттăй çĕр те шăп та лăп çак вырăнта. Нумай ачаллă çемье вара питĕ хавас хăйсене çак тăрăхра çĕр уйăрса панăшăн. Тавралăхĕ те илемлĕ кунта, Шупашкар та çывăхрах.

– Тем пысăкăш тав Республика Пуçлăхне Михаил Игнатьева, республикăн пурлăх тата çĕр ыйтăвĕсемпе ĕçлекен министерствăна тата район администрацине пире çурт лартма çĕр çакăнта уйăрса панăшăн, – терĕ Надежда Юрьевна.

Муркашра 2 пӳлĕмлĕ хваттерте пурăнакан çемье çитес çулла кунта пĕр ывăлĕ валли çурт лартма пуçлама шутлать.

Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев çакна та палăртрĕ. Çак Катькаспа Шомик хушшинчи лаптăкра нумай ачаллă çемьесене çурт лартма тата 0,1 гектаршар тата 111 çĕр лаптăкĕ хатĕрлеççĕ. Пурĕ вĕсем 23 га йышăнĕç. Çавăн пекех ача садне, ытти объекта, инженери инфраструктурине тума та çĕр уйăрнă.

Инженери инфраструктурине вара Шупашкар хулипе Муркаш район администрацийĕсем тунă килĕшӳ тăрăх Шупашкар хула администрацийĕ хăйĕн укçи-тенкипе тăвать.

Çакна та хушса каламалла. Малашне çак 118 га лаптăк çинче Шупашкар хулипе Муркаш район администрацийĕсем тунă килĕшӳсемпе 856 уйрăм çыннăн çурчĕ пулмалла. Ку вăл учета тăнă нумай ачаллă çемьесен 75 проценчĕ пулать. Çавăн пекех йӳнĕ, сахал хутлă (3 хут таран) пурăнмалли çуртсем 22 блок-секци, 280-шар вырăнлă 2 ача сачĕ, 1200 вырăнлă пĕр шкул, магазинсемпе обществăлла апатлану предприятийĕсем, автостанци, ФАП тата ытти объектсем пулмалла.

Çĕрсемпе тĕллевлĕн усă курас ыйтăва иртнĕ эрнере Шупашкарта пулнă Раççей Федерацийĕн Атăл çи федераци округĕнчи ĕç тăвакан органсен канашлăвĕнче те пăхса тухрĕç. Унта нумай ачаллă çемьесене çĕр лаптăкĕсемпе тивĕçтерес ыйтăва та тишкерчĕç. Раççей Федерацийĕн Атăл çи федераци округĕнчи ĕç тăвакан органĕсен пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен ыйтăвĕсемпе ĕçлекен Ассоциацине туса хунине питĕ вырăнлă тесе палăртрĕ Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев. «Çĕр хутшăнăвĕсенче тахçанах йĕрке тумалла пулнă. Çакна пĕр-пĕринпе калаçса тума тата та çăмăлтарах», – терĕ унта Михаил Васильевич Ассоциаци пирки. Республика Пуçлăхĕн сăмахĕсене шута илсен, пирĕн Муркаш район администрацийĕ çĕр ыйтăвĕсенче йĕрке тăвассипе пурнăçран юлманнине, унтан та ытларах, ытти çĕртинчен чылай маларах пуçланине кăтартса парать. Çак 118 га çĕре унпа саккуна пăхса усă куракансенчен «туртса» илсе, унпа тĕллевлĕн усă курма пуçлани вара – Муркаш район администрацийĕ ку енĕпе тунă ĕçĕн малтанхи результачĕсенчен пĕри.

Пĕтĕмпе вара районĕпе çĕр илме кăмăллă нумай ачаллă 79 çемье учетра тăрать. Çак çăмăллăхпа усă курма тивĕçлисем 244 çемье. 24 çемьене çĕр лаптăкĕсемпе тивĕçтернĕ. 2 çемье çурт тума ирĕк илнĕ. Ăна тума пуçланă. 1 çемье вара илнĕ çĕр лаптăкне сутнă. Çемьесене çĕр лаптăкĕсемпе тивĕçтернĕ вырăнсенче инженери инфраструктурине тăвассипе йывăрлăх çук. Вĕсем юнашарах.

**Л. ТУКТИНА.**

## Пĕрлехи информаци кунĕнчен

# Шкулсен малашлăхĕ шухăшлаттарать

**Район администрацийĕн вĕренӳпе çамрăксен политикин пайĕн пуçлăхĕ З. Дипломатова тата ЧР Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствин Муркашри халăха социаллă пулăшу паракан центрăн ертӳçи О. Иванова информаци кунĕнче сӳтсе явмалли ыйтусемпе Муркаш, Мăн Сĕнтĕр тата Ильинка ял тăрăхĕсенче пулчĕç.**

Яваплă çынсем чи малтанах Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕпе С. Ермолаевпа пĕрле Муркашри вăтам шкулти учительсемпе тĕл пулса калаçрĕç.

2014 çул тата планланă 2015 тата 2016 çулсем валли пăхса хунă республика бюджечĕпе паллаштарнă май З. Дипломатова район бюджетĕнчи пысăк пай вĕренӳ çине тăкакланнине те палăртрĕ. Çавăнпа та çулталăк вĕçленичченех кашни вĕренӳ учрежденийĕн уйăрса панă укçа-тенкĕпе туллин усă курмаллине аса илтерчĕ. Çитес çултанпа вара ача сачĕсенче вăй хуракан воспитательсен ĕç укçине тӳлессине те республика хăй çине илет. Апла пулин те вырăнти бюджетра укçа-тенкĕн пĕр пайĕ «пушанать» тесе савăнмалли çук, мĕншĕн тесен ĕç укçи тӳлеме укçа-тенкĕне ку таранччен те «çӳлтен» субсиди майĕпе кучара панă.

Çитес çул районти шкулсене хупма планламан-и? Çак ыйту та пулчĕ калаçу вăхăтĕнче. Ку ыйту çине вара Зоя Юрьевна: «Эпир шкулсене сыхласа хăварма тăрăшатпăр, анчах та ачасем сахалланаççĕ, хăвăрах куратăр», – тесе хуравларĕ. Акă пĕлтĕрхи вĕренӳ çулĕпе танлаштарсан кăна пирĕн районти шкулсене 120 ытла ача сахалрах килнĕ-мĕн. Ку – тепĕр шкул чухлĕ! Тата тĕпĕр саманта та шута илме тивет. Ку таранччен шкул ачисем 9 класс хыççăн хуласенчи вĕренӳ учрежденийĕсене кайни пирки калаттăмăр пулсан, халĕ ӳкерчĕк тата урăхларах. Ятарлă мониторинг пирĕн районти ял шкулĕсенче 5–9 классенче вĕренекенсем тĕп хулари лицей-гимназисене каясси ӳснине кăтартать. Ку вара вĕренӳ пахалăхне ӳстермеллине те калать пулĕ.

Ыйту учительсен ĕç укçин хавхалантару пайĕ пирки те пулчĕ. Хавхалантару пайне тӳлесси кашни шкулта тĕрлĕрен. Хавхалантару пайне тĕрлĕ критерие кура палăртаççĕ, анчах та çак критерисене çирĕплетесси шкулăн полномочийĕ пулса тăрать. Çавăнпа та вĕренӳ пайĕн пуçлăхĕ учительсен хавхалантару пайне палăртмалли критерисене тепĕр хут пăхса тухма, çакăнпа çыхăннă ытти самантсене те педканашлура тишкерме сĕнчĕ.

Муркашри халăха социаллă пулăшу паракан центрăн Мăн Сĕнтĕрти ватăсен вăхăтлăх пурăнмалли çуртне ĕç ушкăнĕ вырăнти ял тăрăхĕн пуçлăхĕпе А. Лаптевпа пĕрле çитрĕ.

Кунта 12 ватă пурăнать. Пурнăçпа тан пыма тăрăшакан ватăсен бюджет пирки, РФ Конституцине йышăннăранпа 20 çул çитни пирки тата информаци кунĕнче сарма палăртнă ытти темăпа пуçарнă калаçăва тимлесех итлерĕç, хутшăнчĕç. Муркашри социаллă пулăшу центрĕн ертӳçи О. Иванова çитес вăхăтра пулма пултаракан улшăнусем çинче чарăнса тăчĕ, ял тăрăхĕн пуçлăхĕ вырăнти лару-тăрупа паллаштарнă май Мăн Сĕнтĕрте ватă çынсем валли мĕнле условисем пуррине каласа пачĕ. Çĕнĕ информаципе культура центрĕнче пушă вăхăта усăллă ирттерме условисем лайăх, анчах та унта çити утма йывăртарах пулнине палăртрĕç ватăсем. Çавăнпах илемлĕ çурта чылайăшĕ каймасть те. «Кунта та ахаль лармастпăр, кичем мар, чиркӳ те çывăхра», – тесçĕ вĕсем.

Ватăсем йывăç çуртра пурăнаççĕ, çавăнпах пушар хăрушсăрлăхĕ пирки те манмалла мар. Ватăсем хăйсем патне хăнана шкул тата садик ачисем тăтăшах килсе тăнине пĕлтерчĕç. Сăмах вара Мăн Сĕнтĕрти ача садĕнче вырăнсем çитменни çине те куçрĕ.

Ильинкăри вăтам шкулти коллективпа пуçарнă калаçура вара çитес çул ачана ача садĕнче тытса тăма тӳлев ӳсесси пирки **(Редакцирен: кун пирки тĕплĕнрех çитес номерсенче пĕлтеретпĕр)**, кăçал районта ачасем вилнĕ тĕслĕхсем пулнă пирки, учительсен коммуналлă тăкаксен компенсацийĕ тата тӳлевсĕр юридици пулăшăвĕ пирки анлă калаçу пулчĕ.

Маларах шкул ачисем сахалланни патне таврăнса вара Ильинкăри вăтам шкулта кăçал 11 класс сукkине каламасăр иртме çук. Шел пулин те, Москакассинчи вăтам шкулта та çакăн пек лару-тăрăвах. Район администрацийĕн вĕренӳпе çамрăксен политикин пайĕн пуçлăхĕ З. Дипломатова палăртнă тăрăх хальхи вăхăтра Муркашри (770 ытла ача), Мăн Сĕнтĕрти, Йӳçкассинчи тата Чуманкассинчи вăтам шкулсенче вĕренекенсен йышĕ районта пысăккисем шутĕнче, çав вăхăтрах пĕчĕк комплектлă шкулсем те сахал мар, вĕсенче вара 40–60 ача кăна. Çапла вара шкулсен малашлăхĕ вырăнти демографи лару-тăрăвĕнчен те нумай килет.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

# Ачасен пуласлăхне халаллана пурнăç

Ноябрĕн 24-мĕшĕ – Амăшĕн кунĕ



«Кам юратăвĕн чикки çук, камăн кăкăрĕпе пĕтĕм тĕнче ура çине тăнă? Çынри пĕтĕм илемлĕх – Хĕвел çутипе Амăшĕн кăкăр сĕтĕнчен», – тесе çырнă Максим Горький. Мĕн хушса калайăн кун çумне?

Аннесем пирки вĕççĕр-хĕрсĕр калаçма пулать. Ырă кăмăллă та мăнаслă, хăюллă амăшĕсем! Миçе çынна пурнăç панă эсир, хăвăр аллăрпа мĕн чуль пурнăçа сыхласа хăварнă тата ĕмĕре тăснă, ырă сăмахăрсемпе-канашăрсемпе мĕн чухлĕ инкеке сирсе яман-ши, мĕн чуль паттăрлăх сирĕн йăваш хул пуççийĕрсем çине вырнан! Çаксене шута хума пĕлекенсем илемлĕ сăвăсем çыраççĕ, юрăсем хываççĕ, легендăсемпе кĕнекесем калăпласçĕ, киносем ўкереççĕ. Çакнашкал сăмахсемпе тав тăватпăр паян хамăра пурнăçри, ĕçри тата вĕренўри нумай йывăрлăхсене чăтса ирттерме пулăшнă тата паян та пулăшакан аннесене. Хăйсем çуратнă пепкисемпе пĕрлех ытти çынсене пулăшу парассинчен те айккинче тăмаççĕ вĕсем. Çапла вăл Амăшĕн чĕри! Анчах ăçтан тупăпăр-ха эпир аннесен юратăвне туллин çутатса памалли, вĕсен ырă кăмăлăхне пур енлĕ кăтартмалли сăмаха?..

Амăшĕн чĕри... Унăн анлă юратăвĕ... «Ăшунта кушак чавтăр та чĕлхў çине çу хур», – ăруран ăрăва амăшĕсем ачисене умра тĕл пулакан йывăрлăхсене çĕнме вĕрентсе каланинчен ку сăмахсем, хĕрарăмăн пурнăçри тĕп позицийĕ.

Çирĕп çемье – ăнăçуллă обществăн пуçламăшĕ. Унта туслăх хуçалансан, ăнăçупа тăнăçлăх та нумай кĕттермĕ, районпа республика тата Раççей куç умĕнчех çирĕпленсе аталанĕç. Кĕр илемĕне киленсе туслăхпа килĕшў çеç пысăк ўсĕмсем тума тата чылай йывăрлăхсене çĕнме пулăшни пирки шутласа утрăм Кашмашăн тĕп урамĕпе.

...Эпĕ çитнĕ килĕн хуçи нумай çул ĕçленипе «Ĕç ветеранĕ» ята тивĕçнĕ Иван Поликарпов мана урамра кĕтсе илчĕ. 65 çул тултаракан арçын вăрман каснă çĕртен таврăннă иккен. Кил картинелле кĕретпĕр. Вите хушшинче Таис инке ĕне суни сисĕнет: ĕне сĕчĕ витрене юхса анса хăйне евĕр кĕвĕ шăрçалать. Эпир килнине курсан вăл Иван пиччепе иксĕмĕре пўртелле иртме сĕнчĕ.

– Мана нумай кĕтмелле пулмĕ. Эсир иртĕр. Федорпа Никита сире унта кĕтеççĕ, – терĕ сĕтпе тулакан витри çинчен куçне илмесĕр тивĕçлĕ кануri инке.

Ялти кирек епле ĕçрен те ютшăнман мăшăр ывăлĕ-хĕрĕсене те ачаранах ĕçе вĕрентнĕ. Çапла вара пĕрлехи вăйпа паян килти хушма хуçалăхри хуралтăсене те тĕрек тытса тăраççĕ вĕсем, тирпейлĕхе те иккĕмĕш вырăна хăвармаççĕ.

Атапай ялĕнче колхозниксен 5 ачаллă çемйинче çуралса ўснĕ Таис инкен – çемьере вăл иккĕмĕш ача – ашшĕ-амăшне кил-тĕрĕшре пулăшассипе те пĕчĕккĕллех ыттисенчен ытларах вăй хума тивнĕ. Ашшĕ – Анисим Михайлович Вязов – Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин участникĕ. Вăл тăтăшах ĕç пурнăç тыткăчи пулни пирки çирĕплетсе калатчĕ çав. Кашни сăмахнех ăша хыврĕ ун чух хĕр пĕрчи. Çапла вара 1950 çулхи кăрлач уйăхĕн 12-мĕшĕнче çуралнă хĕр ача шкулти каникулсенче тăтăшах уй-хир бригадине ĕçлеме çўрерĕ. Ўсерехпе тăрăшуллăскерне колхозри пăрусене пăхас ĕçе те шанма пуçларĕç.

– Ĕçрен ютшăнса тăман та ĕçлеме йывăррине пĕлместĕп, анчах шкулта вĕрене сăмăл марччĕ. Атапай тата Муркаш шкулĕсенче 8 класс пĕтерсен хамăн пурнăçăма ял хуçалăхĕпе çыхăнтартăм. Çамрăклах уй-хир тата ферма ĕçĕсене тиркесе тăман. Иртнĕ ĕмĕрĕн 70-мĕш çулĕсен пуçламăшĕнче вара Муркашри кирпĕч заводне çĕклеме пуçласан хĕр пуççăн унта та самаях вăй хума тиврĕ. Шăпа çавăн пек çырнă пулĕ: эпĕ завод тунă вăхăтра ĕçлерĕм, Зоя кинĕм вара паян кирпĕч кăларнă çĕрте вăй хурать. Кунти ĕçсем кал-кал пынине илтетĕп те чун хĕпĕртет.

Пĕрремĕш ача Оля çуралсан хунямăшĕ сĕннипе Таис инке «Свобода» хуçалăхри уй-хир бригадине ĕçе тухма пуçлать. Кунта вăл çамрăксене ĕçе пĕлсе хăнăхтарнине хам та çав çулсенче улăхра кĕрепле çĕтĕрсе çўренĕрен лайăх астăватăп. Улăхри утăна епле тавăрмалли-турамалли, ăна купалана чух сенĕке епле çавăрса хумалли, çынсем ĕçленĕ вăхăтра кĕрепле çавăрса тăмалла марри – паян та асра уйхир ĕçĕнĕ ăс панă ĕç мелĕсем.

Çур аки, ут çи, вырма, кĕр аки, çĕр улми кăларни, вылăх кăшманĕ пухса кĕртни, колхоз аталантарассипе пурнăçлана строительство ĕçĕсене явăçни тата ĕçрен юлман çав вăхăтрах 5 ача çуратса пурнăç çулĕ çине кăларни – йăлтах Таис инкен ĕç биографийĕ.

– Пилĕк ача çуратрăм та нихăшĕ те ытлашши мар паян. Оля, Эдик, Сергей, Федя, Надя тăван кил ăшшипе тивĕçлĕ пĕлў илсе пурнăç çулĕ çине тухрĕç. Хăйсен çемйисене çавăрнăскерсем паян мана 8 мăнукпа савăнтараççĕ. Ку вара мăшăрăмпа иксĕмĕршĕн – чи пысăк телей-парне, – терĕ Зоя кинĕпе Никита мăнукне хăй çумне ыталаса Таисия Анисимовна.

Хăйĕн пурнăçĕнче паянччен Т. Поликарпова ачасене малти вырăна хурать, вĕсен аталанăвĕшĕн хăйĕнчен мĕн килнине тума тăрăшать. Çакăншăн ачисем те хисеплеççĕ ăна. «Тавах пире кун-çул панишĕн, пурнăçра тивĕçлĕ вырăн тупма пулăшнишĕн», – терĕ шăллĕсемпе йăмăкĕ ячĕпе Мускавра пурăнакан Оля кĕсье телефонĕпе шăнкăравласан.

Çак самантра Таис инке мăнукĕпе вылякан мăшăрĕ çине ăшшăн пăхса илчĕ. Иван Дмитриевич 1948 çулхи чўк уйăхĕн 26-мĕшĕнче çуралнă. Ĕç кĕнекинче вăл ĕçе явăçма пуçланине 1955 çулта тесе çырса паллă тунă. Çав вăхăтранпа вăл май килнĕ чухлĕ тăтăшах хуçалăх ĕçĕнче. Ялта кăмака тăвассипе палăрнăскер кăмака Иванĕ ят та çыпăçнă ун çумне. Кўренмест çакăншăн ĕç ветеранĕ. Ăна чыс вырăнне йышăнать.

**А. БЕЛОВ.**

**Автор сăн ўкерчĕкĕ.**

Асталăх

## Курав уçăлчĕ

Ноябрĕн 21-мĕшĕнче тури чăвашсен музейĕнче черетлĕ курав уçăлчĕ. Ăна Бухгалтер кунне тата Амăшĕн кунне халаллана. Унта Çатракасси ял тăрăхĕнчи Кашмаш ялĕнчи Елена Максимова ĕçĕ-хĕлĕпе тĕплĕн паллашма пулать. Вăл çĕлеме, тĕрлеме ăста. Унăн çитĕнĕвĕсен кĕтесĕ те кунтах вырăн тупнă.

Ĕç ĕмĕрне Елена Петровна бухгалтер специальноçĕпе çыхăнтарнă. Вĕсем икĕ ывăл ўстерсе ура çине тăратнă. Пурнăç çавăн пек килсе тухнă, пархатарлă хĕрарăм тимлĕхĕпе хўтлĕхĕ ыттисене те кирлĕ пулнă. Курава килме васкăр.

**Р. МАКАРОВА.**

## Пахалăхлă продукципе тивĕçтерет

Ял хуçалăхĕ



Ял хуçалăх ĕçченĕ хăйне тĕрлĕ отрасльте тĕрĕслет. Анчах та пĕр тĕрлĕ ытларах аталаннă чухне теприн пĕлтерĕшĕ майĕпен чакнине сисетпĕр. Юлашки çулсенче сысна усракансен йышĕ сахалланчĕ, çавăнпа пĕрлех унран продукци илесси те. Çак самант Раççей ВТОна кĕнипе тата ытти ĕç-хĕлпе çыхăннă пулĕ.

Оперативлă кăтарту тăрăх кăçалхи январь – октябрь уйăхĕсенче районти хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче 1444 пуç сысна тытаççĕ, вăл шутра А. Афанасьева **(сăн ўкерчĕкре)** хуçалăхĕнче 1280 пуç, Ю. Пушкин хуçалăхĕнче 120 пуç, Р. Каргин хуçалăхĕнче 39 пуç тата ытти те. Çак тапхăрта асăннă категори 687,5 центнер чухлĕ продукци туса илнĕ.

Палăртса хăвармалла, Алина Александровна хресчен (фермер) хуçалăхĕ сысна ĕрчетес отрасльте пĕрремĕш çул кăна мар тăрăшать. Кунта çынсене ĕçпе тивĕçтерессипе, хушма ĕç вырăнĕсем туса парассипе ăнăçлă тимлеççĕ.

Ярославка ял тăрăхĕнче вырнаçнă Афанасьевсен хуçалăхĕнче хатĕрленĕ продукци ассортименчĕ пуян тата пысăк пахалăхлă, çавăнпа та вăл тĕрлĕ тăрăха саланать, туянакан та кăмăллать. Паллах, хамăр патри экологи тĕлĕшĕнчи таса апат-çимĕçе аякрипе танлаштараймăн.

Муркашра вĕсем тытакан суту-илў точкинче те туянакан яланах йышлă. Ĕçлес текене вара патшалăх та тимлĕхсĕр хăвармасть. Афанасьевсем сысна ĕрчетес отрасле аталантарма уйăракан пулăшăва тивĕçрĕç, кунта пурнăçлама палăртнă ĕçхĕл татах та анлă.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Акци

# Профессипе кăсăкланчĕç



Мĕнле професси суйламалла? Çак ыйту шкулта вĕреннĕ чух самаях шухăшлаттарать. Ача пĕр тĕрлĕ шухăшлать, ашшĕ-амăшĕ ăна тепĕр тĕрлĕ професси алла илме сĕнет, учительсем те ачан пултарулăхне кура канаш параççĕ...

Юлашки çулсенче ачасене тĕрлĕ профессипе тĕплĕнрех паллаштарасси шкулсенче япăх мар пулса пырать. Ку тĕлĕшпе психологсемпе социаллă педагогсем, класс ертўçисем тăрăшаççĕ. Тĕрлĕ професси çыннисене хăнана чĕннĕрен ачасем вăл е ку професси пирки чăннине ытларах пĕлеççĕ, предприяти-организацисенче экскурсире пулса ĕç çынни хăйне мĕнле туйнине кураççĕ.

Çак эрнере республикăра «Твой выбор профессии» акци активлă иртрĕ. Вăл ачасене пысăк пулăшу кўчĕ: пирĕн районти шкул ачисем те профессисем пирки ытларах пĕлчĕç, тĕрлĕ професси çыннисемпе тĕл пулса малтанхи пĕтĕмлетўсем те турĕç пулĕ.

Çак акци вăхăтĕнче район хаçачĕн журналисчĕ Н. Николаева та Чуманкассинчи вăтам шкулта пулса хăйĕн професийĕпе тĕплĕнрех паллаштарчĕ. Ыйту чылай та тĕрлĕ енлĕ пулни ачасен кăсăкланăвĕ пысăккине кăтартса пачĕ. Калаçу вара хаçат-журнал валли тата сайта лартма хыпар çырнă чух мĕн асра тытмаллипе вĕçленчĕ.

**Хамăр инф.**

Ноябрĕн 24-мĕшĕ – Амăшĕн кунĕ

# Пурнăç пĕлтерĕшĕ – ачасенче



*Сăн ÿкерчĕкре Оринин ял тăрăхĕнчи Татьяна Павловăна куратăр. Вăл Муркашри сĕт-çу заводĕнче производство ертÿçинче тăрăшать. Кунта вăй хума пуçланăранпа январь уйăхĕнче вунă çул пулать ĕнтĕ.*

*Аслă пĕлÿ илнĕ çамрăк специалист кулленхи ĕçе малтанах аслисенчен вĕренсе пынă, халĕ хăй пысăк опыт пухма ĕлкĕрнĕскер – ырă тĕслĕхре. Унăн пултарулăхĕпе тăрăшулăхне чылай ĕç-хĕл çирĕплетет. Акă нумаях пулмасть Татьяна Валерьевнăна Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Хисеп грамотине чысларĕç, çавăн пекех Тав çырăвĕсем те сахал мар унăн.*

*Пÿрте кĕрсен ача-пăча сасси лайăх, вĕсем тĕрĕс-тĕкел ÿссе аталансан, çемьере шăкăл-шăкăл пулсан пурнăç та хĕтлĕ. Павловсем çемьере икĕ ача пăхса ÿстерессĕ, вĕсене тивĕçлĕ воспитани парассишĕн чунтан тăрăшаççĕ. Татьяна Валерьевна мăшăрĕ Шупашкар хулинче вăй хурать. Аслă ачи, иккĕмĕш класри Максим, ытларах ашшĕ çумĕнче пулма тăрăшать. Амăш ăшшишĕн тунсăхласан вара вăл Татьяна Валерьевна çумнерех тĕршĕнет, çапла майпа пусăрăнчăк кăмăла та сирет. Ача садне çÿрекен Настя амăшĕнчен саманхăха та хăпмасть.*

*– Ĕçрен пушансан вăхăта ытларах ачасемпе иртерме тивет. Вĕсен калаçмалли, сÿтсе явмалли нумай, час юмах вуламалла е тишкермелле, е пукане валли илемлĕ тум ăсталамалла, – каласа парать вăл.*

*Çапла пурин кăмăлне те тивĕçтерет çаврăнăçуллă хĕрарăм. Пушă вăхăт вара Татьяна Валерьевнăн пачах та çук тесен йăнăшмăн. Час тĕрлĕ тĕслĕ çип илет те вăл ĕ ку илеме эрешлет. Чечек лартса ÿстерме те ăста вăл. Ÿркенсе тăмасăр кил-йыша уяв сĕтелĕ тавра çавăрать.*

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

## Анне

Анне тесе савса калатпăр
Мĕн пĕчĕкрен эпир ăна.
Чи çывăх ырă çын вăл маншăн,
Тăван сăнар ялан умра.
Пире кун-çул вăл парнеленĕ
Çут тĕнчере телей курма.

Чи хаклă чаплă çыннăм манăн,
Сан пек пуласчĕ пурнăçра.
Анне пире куç пек сыхланă
Тĕттĕм каçри шăплăхсенче.
Чир-чĕр, хуйхăсенчен упранă,
Савса ÿстернĕ хĕвĕнче.
Ăш йăваран эпир саланнă
Уралансан тăван килтен.

Сайра-хутра салам çеç янă –
Тăван анне, каçар пире!
Анне пек çепĕç, ырă, ăшă
Этем пулать-ши çĕр çинче?
Телей тупма-çке питĕ йывăр –
Пурăннă чух упрасчĕ аннене!

**С. ФЕДОРОВА.**
Çатракасси ялĕ.

Смотр-конкурс вĕçленчĕ

# Техника упрассипе палăрчĕç

***Хирте ĕçленĕ ял хуçалăх техникине хĕллехи управа лартассипе йĕркеленĕ районти смотр-конкурсра кăçал «Путь Ильича» агрофирма пĕрремĕш, Суворов яч. хис. хуçалăх иккĕмĕш, Е. Андреев яч. хис. кооператив виççĕмĕш вырăнсем йышăнчĕç. Вĕсем район администрацийĕн 1, 2, 3 степеньлĕ дипломĕсене тата 3000, 2000, 1000 тенкĕ укçан премисене тивĕçрĕç. Смотр-конкурс комиссийĕ «Оринино», «Герой» кооперативĕсене В. Горбуновăн хресчен (фермер) хуçалăхне ырă енчен палăртрĕ.***

Ял хуçалăх техникине хĕллехи управа лартассипе районти хуçалăхсенче лару-тăру çулленех йывăр. Çĕр-шывра агропромышленность комплексне аталантарассипе çĕнĕлĕхсем пурнăçа кĕртнĕ вăхăтра ял хуçалăх техникипе перекетлĕ те тирпейлĕ пулмалли кашни çĕр ĕçченĕ умĕнче тăракан тĕллев.

Çакна ăнланакан çĕр ĕçченĕ паянхи пурнăçра хăватлă ял хуçалăх техникипе ĕçлесе çеç аталанăвăн çĕнĕ чиккисене çĕнсе пырать. Апла пулсан ĕçленĕ техникăна упрасси çине тимлĕрех пăхасси те хресчен ĕçĕнче малти вырăнта.

Район администрацийĕн пуçлăхĕн йышăнăвĕпе ял хуçалăх техникине хĕллехи управа лартассипе ирттернĕ смотр-конкурс кăçал çăмăл мар лару-тăрура иртрĕ. Ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсем унта хутшăннă май йĕпе-сапаллă çанталăкпа тупăшсах малтан кĕрхи уй-хир ĕçĕсене вĕçлессипе тăрăшрĕç. Мал туртăмлисем ĕçсем вĕçленнĕ хыççăн унта хутшăннă ял хуçалăх техникине управа лартассипе те алă усса лармарĕç.

Пĕтĕмлетÿре комисси членĕсем «Путь Ильича» агрофирма механизаторĕсемпе юсавçисем ыттисенчен хастартарах пулнине, вĕсем ГОСТ ыйтăвĕсене туллин пурнăçланине, техника ĕмĕрĕ çине хуçаларах пăхнине палăртрĕç. Çапла вара ял хуçалăх техникине хĕллехи управа лартассине кăçал «Путь Ильича» агрофирма ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăчĕ. Çак ĕç кăтартăвĕсемпе вĕсем республикăра та иккĕмĕш вырăн йышăнни-не паян ырламалла çеç.

Юлашки çулсенче Суворов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕ те техникăна управа лартассипе ытларах тимлĕх уйăрма пуçларĕ.

– Паян хуçалăхра усă куракан техника – механизаторсене тивĕçлĕ ĕç укçи илме пулăшакан механизм. Çакна пирĕн ĕçченсем ăнланчĕç. Çавăнпах хăйсем çу каçа ĕçленĕ техникăна хĕллехи управа лартасси те – вĕсен ĕçĕн уйрăлми пайĕ. Юсавлă техника мĕн чухлĕ вăхăт тухăçлăрах ĕçлет – ĕç укçи çавăн чухлĕ ытларах пулать. Техникăна упрасси çине хамăр енчен те тимлĕх çухатмастпăр. Паян пире вĕсене никам та çÿлтен пăрахса памасть – çичĕ хут тар кăларса хамăрăнах ĕçлесе илес пулать, – тет хуçалăх ертÿçи В. Андреев.

Çулленех ырă та пуçарулă ĕçпе палăракансен ретне кăçал Е. Андреев яч. хис. хуçалăх кĕни кунта хуçалла ĕçлесси вăл илнине çирĕплетет. Асăннă хуçалăх техникăпа тухăçлă усă курса кăçал уй-хир ĕçĕсене вăхăтра пурнăçланипе палăрчĕ.

Ĕçлес текен йывăрлăхсем çине алă сулмасть, ырăнхи ĕçсене паян хатĕрленет. Техникăна хĕллехи управа тĕплĕ лартнисем çур акине хатĕрленессипе те ĕçе кÿлĕнессĕ ĕнтĕ. Çак тăрăшулăха «Восток» хуçалăхра асăрхарăмăр. Эпир пынă кун Василий Уткин, Сергей Наумов, Виктор Пушкин ĕçченсем **(сăн ÿкерчĕкре сулахайран сылтăмалла)** сÿре агрегачĕсене çитес çулхи уй-хир ĕçĕсене валли хатĕрлессипе тăрăшатчĕç.

– Хамăр çеç ĕçлетпĕр теес килмест. Виталий Ефремов тимĕрçĕ хамăра нумай тĕкĕ панине палăртмалла. Хуçалăх ертÿçи те тивĕçлĕ ĕç условийĕсем туса парассине иккĕмĕш вырăна хăвармасть, – терĕç юсавçăсем сÿрене юсавлисен ретне илсе тăратнă май.

Кам техника çине тимлĕ пăхать, вĕсен мехпаркĕсенче те тирпейлĕ, тимĕр-тăмăр та йăваланса выртмасть, ларакан техника патне те вăл йăтăнса анасран хăраса пымалла мар.

**С. НИКОЛАЕВ,**
**патшалăх техника надзорĕн районти инспекторĕ;**
**А. БЕЛОВ,**
**район хаçачĕн ял хуçалăх пайĕн редакторĕ.**
**Автор сăн ÿкерчĕкĕ.**



Пенси фондĕнче

# Электрон сервисĕ меллĕрех

Чăваш Енре страхователсем хушшинче Пенси фончĕн электрон сервисĕпе усă курасси ÿссе пырать. Иртнĕ виçĕ уйăх хушшинче РФ Пенси фончĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕн сайтĕнче предпринимательсемпе ĕç паракансен 5,5 пин ыйтăмне регистрациленĕ.

«Предпринимателĕн харпăр хăй кабинетне» («Личный кабинет предпринимателя») кĕрекенсен шутĕнче 2,2 пин çын ытла обязательнăй пенси страхованийĕн тата медицина страхованийĕн страховани взносĕсене тÿлессипе парăмсем пуррипе интересленнĕ, страховани взносĕ, пени, штраф тата патшалăх пенсисене хушса финанслассин программине хутшăнса хушма страховани взносĕ тÿлеме квитанци илнĕ. Ку услугăсемпе системăра регистрациленмесĕрех усă курма май пур. Страховани взносĕсем мĕн чухлĕ шутласа пани тата тÿлесе татни пирки тулли информаципе «Предпринимателĕн харпăр хăй кабинетĕнче» регистрациленсен тивĕçтерессĕ. Кун пек ыйтупа Пенси фончĕн территори управленийĕсене 650 çын пынă. Муркаш районĕнче çак вăхăта «Предпринимателĕн харпăр хăй кабинетĕнче» 15 предпринимателе регистрациленĕ.

Предприятисемпе организацисем «Ĕç паракан-тÿлекенĕн харпăр хăй кабинечĕн» («Личный кабинет плательщика-работодателя») электрон сервисĕпе усă кураççĕ. Кунта вĕсем обязательнăй пенси тата медицина страхованийĕн страховани взносĕсене тÿлессипе лару-тăру мĕнлипе паллашаççĕ, уйрăм тапхăршăн тÿлев реестрĕсене илессĕ тата хăйсен тÿлевĕсемпе танлаштарса пăхаççĕ, кварталсерен хатĕрлесе паракан отчетсем тĕрĕс е тĕрĕс мар пулнипе интересленеççĕ. Çакă вăхăта чылай перектлеме, информаци илессине ансатлатма май парать. Çавăнпах ĕнтĕ республикăри 846 ĕç паракан системăра регистрациленнĕ те, 3 пин хут ытла услугăсемпе усă курнă. Муркаш районĕнче «Ĕç паракан-тÿлекенĕн харпăр хăй кабинетĕнче» паянхи куна 79 организаци регистрациленнĕ.

«Предпринимателĕн харпăр хăй кабинетне» тата «Ĕç паракан-тÿлекенĕн харпăр хăй кабинетне» РФ Пенси фончĕн Чăваш Республикинчи управленийĕн сайтĕнче pfrĕcbxĕru адреспа вырнаçтарнă. Кăçал çулла Раççей Пенси фончĕн пилот проекчĕ сăнавлă майпа Чăваш Енре хăйне лайăх енчен кăтартса пачĕ, унпа куллен анлă усă кураççĕ.

**Пенси фончĕн районти управленийĕ.**

Спорт тата сывă пурнăç йĕрки

## Тăрăшулăхран – ăнăçу патне

Тăрăшакан çын пур çĕрте те, тĕрлĕ шайра та ÿсĕмсем тума пултарать. Çĕр-шыв, тĕнче шайĕнчи çитĕнÿсем вара, сăмахран, спортра, кашнинех пулмаççĕ, çакна валли чылай тар тăкма тивет. Апла пулин те пирĕн районтан сахал мар паллă спортсмен тухнă. Çамрăксем те шанăç параççĕ.

Акă Юнкă ял тăрăхĕнче Павел Селюшкина палламан çын çук та ĕнтĕ. «Хевтесĕр пулнине пăхмасăрах Павела шкултах бадминтонла вылямa хăнăхтартăм. Хĕлĕнçăвĕн тенĕ пекех Юнкăри вăтам шкула Орининтан велосипедпа çÿреттĕм», – каласа парать паян пултарулла спортсменăн пĕрремĕш тренерĕ Иван Воробьев.

Юнкăри вăтам шкулта спортзал пулманнине пăхмасăрах тренер Павелпа тăтăшах тренировкăсем ирттернĕ. Хулана та илсе çÿреме тытăннă, çак пултарулăха унта аталантарма пуçланă. Çак ĕç пĕртте ахаль пулман. Хальхи вăхăтра Павел ял хуçалăх академийĕн студенчĕ. Бадминтон енĕпе вăл икĕ хутчен Раççей чемпионĕ пулма тивĕçнĕ те ĕнтĕ.

Нумаях пулмасть, ноябрĕн 5–10-мĕшĕсенче, Павел Селюшкин бадминтон енĕпе тĕнче ăмăртăвĕнче те вăй виçнĕ. 38 çĕр-шыври 350 спортсмен хутшăннă унта. Павел вара пĕрремĕш тесеткене кĕме пултарса çитес çулхи тĕнче ăмăртăвне хутшăнма путевка çĕнсе илнĕ.

## Ÿсĕм çулĕ çинче

Ноябрĕн 8–10-мĕшĕсенче Муркашри çамрăк боксерсем черетлĕ ăмăртура çитĕнÿсем тунипе палăрнă. Чул хула облаçĕн кубокне çĕнсе илессишĕн иртнĕ çуă ăмăртура Муркаш ен çамрăкĕсем 8 медаль çĕнсе илме пултарнă.

Иван Налимов, Николай Пегасов, Александр Максимов тата Сергей Кудряшов кĕрешÿсенче çĕнтерсе кубоксене тивĕçнĕ. Алексей Кудряшов, Анатолий Кожевников, Артем Кожевников тата Николай Яриков 2-мĕш вырăнсем çĕнсе илнĕ.

Боксерсен тренерĕсем – С. Черкашин, О. Сютруков тата С. Черкашин кĕçĕнни – районта сывă пурнăç йĕркине сарассипе, ачасене спорта явăçтарассипе нумай тимленине палăртмалла. Ачасене бокспа кăсăклантарса, хавхалантарса ÿсĕм çулĕ çине кăларни те пĕлтерĕшлĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Кредит

## Хушма хуçалăха аталантарма

Уйăх пуçламăшĕ тĕлне хушма хуçалăха аталантарма районта пĕтĕмпе 503 кредит килĕшĕвĕ 93932 пин тенкĕлĕх тунă, вăл шутран 209-шĕ 43064 пин тенкĕлĕх «Россельхозбанкпа», 294-шĕ 50868 пин тенкĕлĕх Раççей Перекет банкĕпе. Ку енĕпе уйрăмах Муркаш (51 кредит), Ярапайкасси (44), Çатракасси (42), Катькас (41), Оринин (39) ял тăрăхĕсенчи çынсем пуçарулла пулнине палăртмалла.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

## Пĕлтерӳсем. Объявления

# Уважаемые потребители электроэнергии!

**ОАО «Чувашская энергосбытовая компания» сообщает, что с октября 2013 года в отделениях ФГУП «Почта России» размещены специальные ящики для приема показаний индивидуальных приборов учета. Услуга доступна во всех районных почтамтах.**

**Нововведение должно значительно облегчить процесс передачи показаний для бытовых абонентов. Чтобы сообщить информацию в почтовых отделениях, абоненту надо заполнить специальный бланк, расположенный в прозрачном пластиковом кармане на ящике, и опустить его в ящик. В форме должны быть указаны № лицевого счета, ФИО, адрес и показания приборов учета. Таким образом, граждане-потребители избавлены от необходимости выстоять очередь в пункт приема показаний, добраться или дозвониться в территориальный офис ОАО «Чувашская энергосбытовая компания».**

**ОАО «Чувашская энергосбытовая компания» рекомендует снимать и передавать показания индивидуального прибора учета в ресурсоснабжающую организацию с 23 по 26 числа текущего месяца ежемесячно.**


Лицевой счет 900xxxxxx
ФИО Иванов Иван Иванович
Адрес район, населенный пункт, улица, дом
Контактный телефон 89031234567
Показания прибора учета электроэнергии:

| 1-тарифный | 2-тарифный | 3-тарифный |
|---|---|---|
| 00151 | день | пик |
| | ночь | полупик |
| | | ночь |

23.11.2013
дата подпись






2-7.

* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:121301:1, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Жирнов Вениамин Валерьянович, Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д. Милюдакасы, ул. Колхозная, д. 35.

Проект межевания земельного участка подготовлен кадастровым инженером Кольцовым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-27. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:121301:1. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение.

С проектом межевания земельного участка можно ознакомиться по адресу: 429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельного участка принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары, пр. Московский, д. 37.

ООО «Росметалл» требуются рабочие, охранники, менеджер по продаже профнастила и металлочерепицы. Требование: знание оргтехники, ПК, учетных программ (1С торговля). Адрес: д. Сидуккасы, ул. Сидуковская, 44 (ост. Москакасы). Тел.: 8-927-667-22-32, 8-927-667-88-48, 8(83541)66-3-84. 3-4.

* * *

Мартăн 10-мĕшĕнче пăруламалли хура тĕслĕ тынашки сутатпăр. Катькас ялĕ. Тел.: 8-905-345-72-95.

* * *

**УВАЖАЕМЫЕ АБОНЕНТЫ – ПОТРЕБИТЕЛИ ГАЗА!**

В соответствии с Федеральным законом от 23.11.2009г. №261-ФЗ «Об энергосбережении и повышении энергетической эффективности и о внесении изменений в отдельные законодательные акты Российской Федерации» и последующими изменениями к нему установку и ввод в эксплуатацию индивидуальных приборов учёта газа необходимо произвести до 1 января 2015 года.

Установка приборов учёта газа является обязанностью собственников газифицированных квартир в многоквартирных домах и индивидуальных жилых домов, а также лиц, представляющих интересы этих собственников.

Установка приборов учёта газа производится филиалами ОАО «Газпром газораспределение Чебоксары» и их газовыми участками на основании письменного заявления после согласования его типоразмера с поставщиком газа ООО «Газпром межрегионгаз Чебоксары». С более подробной информацией по установке приборов учёта, а также о других организациях, допущенных к их установке в существующем жилфонде, Вы можете ознакомиться на официальном сайте www.chsetgaz.ru в разделе «Информация для населения».

**ОАО «Газпром газораспределение Чебоксары».**

Лицензия Ростехнадзора от 11.06.2010 № ВП -00-011658 (ЖКС).

***

**Администрация Хорнойского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики информирует о возможности продажи земельных долей, находящихся в общей долевой собственности, 9544,48 балло-гектаров муниципального образования Хорнойского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики в собственность по цене, определяемой как произведение 15 процентов кадастровой стоимости одного квадратного метра такого земельного участка и площади, соответствующей размеру этой земельной доли, расположенной по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Хорнойское сельское поселение, кадастровый номер 21:17:140501:2.**

**Заявления принимаются в течении шести месяцев с даты опубликования по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Хорной, ул. Новая, д. 14**

* * *

Пĕчĕк пăру, сурăх туянатăп.
Тел.: 8-905-343-60-63. 6-10.

* * *

Продаю: кирпич красный одинарный, полуторный; облицовочный всех цветов; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк; гравмассу; керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы. Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352)44-20-97. 8-14.

* * *

Продаю ОПГС (гравмасса), песок.
Тел.: 8-905-199-69-33. 10-10.

* * *

Продаются березовые дрова. Звонить после 18 час. Тел.: 8-903-065-58-68. 3-3.

* * *

Требуются забойщики скота без вредных привычек. Тел.: 8-960-311-19-71. 3-4.

* * *

Продаю мед: магазин «Визит», Моргаушский рынок, место 40. Цена – 300 руб. 1-5.

* * *

Продаю метровые дубовые дрова. А также дубовые необрезные доски, толщиной 6 см. Тел.: 8-337-388-55-16, 63-0-39. Николай.

* * *

Требуется ПАРИКМАХЕР, можно без опыта работы, с. Моргауши, рынок, парикмахерская «Магия красоты». Тел.: 8-937-383-02-12.

* * *

Продается комната в г. Чебоксары, центр, 19 кв.м. Тел.: 8-903-345-08-75.

* * *

Январь уйăхĕнче пăруламалли хура тынашки сутатăп. Хакĕ калаçса татăлнă тăрăх. Тел.: 8-960-301-82-87.

**СЛУХОВЫЕ АППАРАТЫ**
28 ноября с 11 до 20 часов в РДК с. Моргауши
Выставка-продажа слуховых аппаратов российского и зарубежного производства от 3000 до 20000 руб. Аксессуары. Гарантия. Боле 20 видов. Пенсионерам скидка 10%. Выезд на дом бесплатно. Справки по тел.: 8-961-883-39-45.
Св-во № 306552826400080 выд. 07.10.2011 г.
Имеются противопоказания. Необходима консультация специалиста.

Спутниковое цифровое телевидение
ТРИКОЛОР - 7300 руб. +подарок на 500 руб.
ТЕЛЕКАРТА - 3000 руб. Дилер, установщик по району.
Тел.: 8-906-385-29-30. 9-10.

Бурение индивидуальных колодцев и скважин. Кольца колодцев ж/б (замковые, простые) D-0.7;1.0;1.5, крышки днища. Доставка. Установка. Тел.: 8-902-327-82-52. 3-12.

Цифровое спутниковое телевидение
ТРИКОЛОР - 7000 руб. ТЕЛЕКАРТА - 3000 руб.
Гарантия. Тел.: 8-905-345-77-19. 2-10.

**НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ**
**Тел.: 8-927-667-40-92.** 23-33.




Срочно! Вахта в Москву и МО:
– фасовщицы-упаковщицы
– грузчики-комплектовщики
Жилье, питание – бесплатное.
Вахта: 15/15, 20/10, 30/15, 45/15.
З/п 27 000-35 000 руб. 5-5.
Тел: 8(8352)36-42-92, 36-42-94.

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 9-10.




АКЦИЯ! ОСЕННИЕ СКИДКИ! Продаем пропаренные керамзитобетонные блоки, цемент, керамзит. Адрес: с. Моргауши, «Агропромснаб». Тел.:8-905-340-07-78. 10-10.

ПИЛОМАТЕРИАЛЫ ОБРЕЗНЫЕ ВСЕХ РАЗМЕРОВ. Тел.: 8-903-346-40-58, 8-905-346-63-36. 10-10.

ПЕСОК речной, ОПГС (гравмасса), ЩЕБЕНЬ. Доставка. Тел.: 8-927-668-84-40. 42-43.

БЕТОН, РАСТВОР всех марок. Доставка. Дешево. Тел.: 8-927-668-87-78. 42-43.

Продаю ПЕСОК, ГРАВМАССУ от 10 до 15 тонн. Доставка. Тел.: 8-903-065-60-58. 20-25.




## Прогноз погоды

| | суббота 23 ноября | | | | воскресенье 24 ноября | | | | понедельник 25 ноября | | | | вторник 26 ноября | | | | среда 27 ноября | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | -1 | 0 | +1 | -1 | -1 | -1 | 0 | 0 | 0 | 0 | +1 | +1 | +2 | +3 | +4 | +2 | 0 | 0 | +1 |
| Давление мм | 756 | 756 | 755 | 754 | 752 | 751 | 749 | 748 | 747 | 746 | 744 | 743 | 742 | 742 | 742 | 742 | 744 | 746 | 749 |
| Влажность % | 74 | 73 | 75 | 77 | 75 | 70 | 69 | 73 | 80 | 77 | 64 | 84 | 87 | 83 | 73 | 64 | 91 | 93 | 88 |
| Ветер м/сек | 4 | 5 | 3 | 5 | 4 | 5 | 5 | 7 | 4 | 6 | 5 | 7 | 6 | 7 | 5 | 6 | 2 | 1 | 3 |
| | Ю | Ю | Ю | Ю | Ю | Ю | Ю | Ю-З | Ю | Ю | Ю | Ю | Ю | Ю | Ю | Ю | Ю | В | С-В |
| Солнце восход / заход | | 08:46 | 16:32 | | | 08:48 | 16:31 | | | 08:50 | 16:30 | | | 08:51 | 16:28 | | 08:53 | 16:27 | |
| Луна восход / заход | | 22:02 | 12:32 | | | 23:09 | 12:55 | | | - | 13:16 | | | 00:17 | 13:35 | | 01:28 | 13:53 | |

ЗАО «Моргаушский кирпичный завод» выражает глубокое соболезнование главному инженеру Попову С.В. в связи с преждевременной кончиной **ТЕСТЯ.**

Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви
ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин “Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ” Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36. E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 2 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Макарова Р.А.
Пичете панă 15.11.2013 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин., чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4807.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.